УДК 811.512.111’36
ББК 81.635.1-2

*Ăслăлăх статйи*

# «ХЫПАР» ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ТЫТĂМНЕ ЕПЛЕ ПĂХĂННИ ÇИНЧЕН

**Ю. М. Виноградов**
Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ,
Шупашкар хули, Раççей
jurijvin46@mail.ru

***Аннотаци.*** Статьяра чăвашсен «Хыпар» хаçатĕнче тĕл пулакан паллăрах йăнăшсене тишкернĕ. Йăнăшсем, тĕпрен илсен, чăваш чĕлхи грамматикин нормисене пăхăнманнипе çыхăннă. Ку вăл — çуклăха, ыйтăва, нумайлăха, иртнĕ вăхăта палăртма пĕлменни, глагол-сăр предложенисемпе вырăнсăр усă курни, яланхи вырăна кăтартас вырăнне япала ячĕсем çумне вăхăтлăх вырăн пĕлтерĕшлĕ *-ри (-ти, -чи)* аффикс лартни, çыхăну мелĕсемпе сă-махсен пĕлтерĕшне шута илменни. Курăмлă лексика йăнăшĕ тесе сăмахсене пĕр-пĕринпе пăтраштарнине каланă. Автор хаçатçăсене орфографин уйрăм çырас çулĕ çине хăюллăрах куçма чĕнет. Сыпăнчăклă текстсем тунă чухне сиксе тухакан тĕрлĕрен йăнăша тишкерет. Автор çирĕплетнĕ тăрăх, йăнăшĕсенчен ытларахăшĕ хаçат ĕçтешĕсен шухăшлавĕ вырăс чĕлхин пысăк витĕмĕнче пулнипе çыхăннă.

*Тĕп сăмахсем*: йăнăш, грамматика, çуклăх, пурлăх, нумайлăх, аффикс, пĕлтерĕш, орфографи, уйрăм çыру, текст, сыпăнчăклă текст

*Цитатăлама*: Виноградов Ю. М. «Хыпар» чăваш чĕлхин тытăмне епле пăхăнни çинчен // Хальхи гуманитаристика. 2026. 2 т. 1 №. С. 42 — 49

© Виноградов Ю. М., 2026

*Научная статья*

# О СТЕПЕНИ ОТРАЖЕНИЯ СТРУКТУРЫ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА В ГАЗЕТЕ «ХЫПАР»

**Ю. М. Виноградов**
Чувашский республиканский институт образования,
г. Чебоксары, Россия
jurijvin46@mail.ru

***Аннотация.*** В статье анализируются наиболее заметные ошибки, встречающиеся в чувашской газете «Хыпар». Большинство ошибок связаны с нарушением грамматических норм чувашского языка. Это — неправильное выражение отрицания, вопроса, множественности, прошедшего времени, использование безглагольных предложений вместо глагольных, употребление в качестве показателя постоянного состояния аффикса *-ри (-ти, -чи)*, обозначающего временное место, путаница в использовании синтаксических аффиксов в связи с незнанием слов. Как явная лексическая ошибка рассмотрено употребление одного слова вместо другого. Автор призывает быть смелее в переходе к раздельному написанию некоторых словосочетаний. Также отмечены ошибки в выстраивании связных текстов. Те или иные недостатки, главным образом, появляются под влиянием структуры русского языка на мышление говорящего и пишущего.

*Ключевые слова*: ошибка, грамматика, отрицание, утверждение, множество, аффикс, значение, орфография, раздельное написание, текст, связный текст
*Для цитирования*: Виноградов Ю. М. О степени отражения структуры чувашского языка в газете «Хыпар» // Современная гуманитаристика. 2026. Т. 2. № 1. С. 42 — 49

*Scientific article*

# ABOUT THE DEGREE OF REFLECTION OF THE STRUCTURE OF THE CHUVASH LANGUAGE IN THE NEWSPAPER "KHYPAR"

**Yu. M. Vinogradov**
Chuvash Republican Institute of Education
Cheboksary, Russia
jurijvin46@mail.ru

***Abstract.*** The article analyzes the most notable errors found in the Chuvash newspaper "Khypar". Most of the errors are related to a violation of the grammatical norms of the Chuvash language. This is an incorrect expression of negation, Ǎuestion, multiplicity, past tense, the use of verbless sentences instead of verb sentences, the use of the affix *-ri (-ti, -chi)* as an indicator of a permanent state, denoting a temporary place, confusion in the use of syntactic affixes due to ignorance of words. The use of one word instead of another is considered as a clear lexical error. The author urges to be bolder in the transition to separate spelling of some phrases. Errors in building coherent texts were also noted. These or other disadvantages mainly appear under the influence of the structure of the Russian language on the thinking of the speaker and the writer.

*Keywords*: error, grammar, negation, statement, set, affix, meaning, spelling, split spelling, text, coherent text
*For citation*: Vinogradov Yu. M. About the degree of reflection of the structure of the Chuvash language in the newspaper "Khypar" // Modern humanities. 2026;2(1):42 — 49

## Кӳртӗм

Чӑвашла тухакан хаҫат-журналӑн тата ытти информаци хатӗрӗсен ҫырупа пуплев манерӗ пирки калаҫма ятарласа конференци тахҫантанпах ирттермен, халь вара малашлӑха еплерех ҫулпа ярасси пирки шухӑшласа пӑхма тиветех пулас.

## Тӗпчев материалӗсем тата меслечӗсем

«Хыпар» издательство ҫурчӗ кӑларакан «Хыпар» тата ытти хӑш-пӗр хаҫата вуланӑ май эпир унӑн ӗҫтешӗсем тӑрӑшса ӗҫленине те, вӗсен мӗнле йывӑрлӑхсем пуррине те асӑрхама тӑрӑшатпӑр. Пӗр вӑхӑт хаҫат пысӑк материалсене кӑмӑлланипе палӑрчӗ. Паян ун страницисенче материал чылай йышлине, ҫавна май вӗсем информаци енчен пуяннине куратпӑр. Курӑмлӑ йӑнӑшсене асӑрхасан эпир вӗсене тишкерсе редакцие ҫырса пӗлтерсе пыратпӑр. Ку ӗҫ 2022 ҫултанпа пырать. Ҫырусем хатӗрленӗ май пуҫтарӑннӑ материала эпир халь пӗтӗмлетӳллӗ тишкерсе парӑпӑр.

## Тӗпчев результачӗсем, вӗсене сӳтсе явни

Йӑнӑшсем, тӗпрен илсен, чӑваш чӗлхин грамматикин нормисене пӑхӑнманнипе пулаҫҫӗ. Вӑл йӑнӑшсенчен пӗрисем пӗтсе пыраҫҫӗ, теприсем каясшӑнах мар, ҫӗнӗрен тупӑнаканнисем те пур.

Хальхи вӑхӑтра манӑҫа тухма пуҫланӑ йӑнӑшсенчен ҫуклӑха, ыйтӑва тата нумайлӑха палӑртассипе ҫыхӑннисене асӑнма юрать. «Хыпарпа» унӑн ҫумӗнчи хаҫатсенче вӗсене 2022 ҫулта та, унччен те асӑрхаттӑмӑр. Тӗслӗхрен, «Хресчен сасси» хаҫатӑн 2022 ҫулхи пуш уйӑхӗн 2-мӗшӗнче тухнӑ номерӗнче (8-мӗш стр., «Кулӑш — ӗҫре пулӑш») ҫуклӑха палӑртассипе ҫыхӑннӑ харӑс икӗ йӑнӑш тӗл пулать:

1) — *Кин, выльӑха апат патӑн-и?*

— ***Ҫук****: ывӑлу ҫывӑра****ть****-иҫ.*

2) — *Вова, эсӗ урокусене хатӗрлетӗн-и?*

— ***Ҫук***.

Пӗрремӗш текстра: «***Ҫук**, пама**ра**ӑм-ха: ывӑлу ҫывӑрать-иҫ*», — темелле. Иккӗмӗшӗнче «***Ҫук**, хатӗрле**мес**тӗп*» предложени кирлӗ.

2022 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 6-мӗшӗнче тухнӑ «Хыпар» номерӗнче «Ӗненетӗр-и е ҫук-и?» ятлӑ рубрика пурччӗ. Ячӗ чӑваш чӗлхин грамматикин тытӑмне тивӗҫтермест. Ку йӑнӑша ҫав ҫулах «Хыпарӑн» ҫу уйӑхӗн 27-мӗшӗнче тухнӑ номерӗнче (13-мӗш стр.) тата ячӗҫ: «*Ӗненетӗр-и е ҫук?*». Тӗрӗс вариант «*Ӗненетӗр-и, ӗненместӗр-и?*» пулмалла.

Малалла «Хыпарта» асӑрханӑ йӑнӑшсенчен иккӗшӗн пирки калаҫу пулӗ. Вӗсем вырӑсла шухӑшласа ҫырнипе пулнӑ, грамматика йӑнӑшӗ шутланаҫҫӗ.

1. 2022 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 20-мӗшӗнчи «Хыпар» номерӗн «Кулӑш картинче» (13-мӗш стр.) ҫакнашкал диалог пур:

— *Шыва кӗме юрататӑн-и?*

— ***Ҫук***.

Ку тӗслӗхре ҫуклӑха тӗрӗс палӑртман. Чӑвашла «***Ҫук**, юрат**ма**стӑп*» темелле. Кун йышши йӑнӑш каярах сахалланчӗ, ҫапах пач тасалса пӗтеймерӗ. 2024 ҫулта ҫурла уйӑхӗн 1-мӗшӗнче тухнӑ номерте ҫуклӑхпа ҫыхӑннӑ йӑнӑш тепӗр хут тӗл пулать:

— *Уйрӑлнӑ хыҫҫӑн эсӗ тата авланасшӑн-и? — ыйтать арӑмӗ.*

— ***Ҫук***.

Хуравра «***Ҫук**, авланасшӑн **мар***» темелле.

2024 ҫулта ҫӗртмен 27-мӗшӗнче тата утӑ уйӑхӗн 4-мӗшӗнче тухнӑ номерсенче ҫуклӑха вырӑсла палӑртнӑ тӗслӗхсем ҫине-ҫине тӗл пулаҫҫӗ:

1) — *Хир сысни тытрӑн-им?*

— ***Ҫук***.

2) — *Компасӑн тепӗр енчи тӗкӗрӗ мӗн тумалли, пӗлетӗн-и?*

— ***Ҫук***.

Хуравсенче ҫуклӑх паллиллӗ сказуемӑй хушса хумалла: *ҫук, тыт**ма**рӑм*; *ҫук, пӗл**ме**стӗп*.

Ҫуклӑха палӑртассинчи йӑнӑшсен шутне ҫуклӑх мелне сказуемӑйран уйӑрса ытти сӑмахсем ҫумне куҫарнине те кӗртмелле: *Ахальтен **мар** искусствӑн ҫак тӗсӗ пурнӑҫра хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне тупнӑ* («Хыпар», 2025.11.25). Ҫуклӑха чӑвашла палӑртнӑ чухне **сказуемӑй яланах ҫуклӑ формӑра пулмалла**. Ҫуклӑх кӑтартакан меле урӑх вырӑна куҫарни грамматика йӑнӑшӗ шутланать.

Тепӗр чухне *ҫук* сӑмаха каласан та, каламасан та юрать, мӗншӗн тесен ҫуклӑх, сказуемӑйра глаголӑн ҫуклӑ формипе пӗрре палӑртнӑскер, ҫухалмасть. Танл.: *Памарӑм-ха. Хатӗрлеместӗп. Ӗненместӗр-и? Авланасшӑн мар*. *Ҫук* сӑмаха хушса хуни ҫуклӑха вӑйлатать анчах. Маларах кӑтартнӑ диалогсенчи *ҫук* сӑмахран анчах тӑракан предложенисем йӑнӑш, кунашкалли вырӑсла шухӑшласа калаҫнипе е ҫырнипе пулать.

Ҫуклӑха хирӗҫ пурлӑх тӑрать. Ку категорипе ҫыхӑннӑ йӑнӑш та вырӑс чӗлхин витӗмӗнчен килет, мӗншӗн тесен пирӗн те вырӑссем: «*Да!*» — тени хыҫҫӑн кайса *ҫапла* сӑмахпа усӑ курас йӑла пур. Акӑ «Кил-ҫурт, хушма хуҫалӑх» хаҫатри (2024.07.25) диалога пӑхӑр:

— *Алло, ку радио-и?*

— *Ҫапла*.

Автор вырӑс чӗлхин лексикин тытӑмне кӑна шута илнӗ, грамматикине асӑрхамасӑр хӑварнӑ. Хурав репликӑра: «*Ку — радио*», — темелле пулнӑ.

**Ыйтăва** палăртассинчи йăнăшсене «Хыпарпа» çумĕнчи хаçачĕсем, тĕпрен илсен, çуклăхпа çыхăннисемпе пĕр вăхăтра туса пычĕç. Акă 2022 çулта çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче тухнă «Хыпарта» Юхма Мишшипе калаçнине пичетленĕ. Унта «*Сăвă е роман çырма лайăхрах?*» предложенипе усă курнă вырăн пур. Кун пек каланин тĕслĕхне автор вырăссенчен илнĕ: «*Что лучше писать: стихотворение или роман?*» Ыйтăва чăвашла тĕрĕс палăртас тесен *кам? ăçта? мĕншĕн?* йышши ятарлă ыйту сăмахĕсем тата *-и*, *-им*, *-ши*, *-шим* татăксем кирлĕ. Çавăнпа: «***Мĕн** çырма лайăхрах: сăвă çырма-**и** е роман çырма-**и**?*» — тенине ним те çитмест.

**Нумайлăха** палăртассипе çыхăннă йăнăшсем, эпир асăрханă тăрăх, мăшăрлă органсене пĕлтерекен *куç*, *ура*, *алă*, *хăлха*, *тута* йышши сăмахсемпе пулаççĕ. Акă 2025 çулта ака уйăхĕн 3-мĕшĕнчи «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçат «*Куç**сем** лашана шыраççĕ*» предложенипе усă курнă. Тĕп членсем иккĕшĕ те нумайлă хисепре тăни йăнăш иккенĕ чăвашла лайăх пĕлекен çынна тӳрех курăнать. Çакна юнашар «*Ура мĕншĕн шăнать?*» тĕрĕс предложени пурри пушшех пысăклатать.

Хутшăнура час-час тĕл пулакан йăнăш — автор хăйĕнпе мĕн пулса иртни çинчен каласа панă чухне предложенин глагол сказуемăйне **иртнĕ причасти** формине лартни. Тĕслĕхрен, 2025 çулăн çу уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухнă номерте «Тăрăшакан валли яланах çул уçă» материал (11-мĕш стр.) пичетленсе тухрĕ. Унта Ираида Матьянова учительница хăйĕнпе çыхăннă пулăмсем çинчен çине-çинех глаголăн иртнĕ причасти формипе усă курса каласа парать: *Эпĕ конкурссенче çĕнтерекеленĕ. Çак ăсталăха хам тĕллĕн вĕреннĕ. Пулăшакан никам та пулман* т. ыт. те. Куншăн Ираида Матьянова хăй те айăплă паллах, анчах яваплăха редакци çинчен сирсе яма кирлĕ мар. Тĕрĕс калас тăк: «*Эпĕ конкурссенче çĕнтереттĕм. Çак ăсталăха хам тĕллĕн вĕрентĕм. Пулăшакан никам та пулмарĕ*», — темелле. Иртнĕ причасти форми калакан хăй çинчен сăмахланă чухне хăçан тата ăçта çуралнине пĕлтернĕ самантра кăна вырăнлă, мĕншĕн тесен çын хăй çуралнине курмасть, ас та тумасть. Тĕслĕх: *Эпĕ 1946 çулта кăрлачăн 1-мĕшĕнче çуралнă.*

2. Грамматикăпа çыхăннă тепĕр çитменлĕх — **глаголсăр** предложенисене хальхи вăхăт пĕлтерĕшĕпе мар, пулас вăхăт пĕлтерĕшĕпе калани. Сăмахран, Н. Смирнова Н. В. Никольскин çуралнă кунĕ çинчен калакан материалта (Хыпар, 2022.05.20, 3-мĕш стр.) «*Çитес çул — Николай Никольский çуралнăранпа 145 çул*» предложени тĕл пулать. Кунта пулас вăхăта хальхи вăхăта пĕлтерекен глаголсăр предложенипе палăртас тенĕ. Чăвашла калас тесен глагол кирлĕ: «*Çитес çул Николай Никольский çуралнăранпа 145 çул пулать*» е «*2023 çулта Николай Никольский çуралнăранпа 145 çул çитет*».

«Хыпар» хаçатăн 2024 çулăн çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухнă номерĕн пĕрремĕш страницин юлашки йĕркинче шкул ачисене саламласа редакци икĕ предложени çырнă: «*“5” паллăсем кăна сунатпăр! Пĕлӳ кунĕ ячĕпе!*». «*Пĕлӳ кунĕ ячĕпе!*» предложение икĕ майлă ăнланма пулать: 1) «*Пĕлӳ кунĕ ячĕпе “5” паллăсем кăна сунатпăр!*» тесе (танлаштарăр: «*Эпĕ сана кĕтрĕм. Кунĕпе*»); 2) вырăссем «С Днем знаний!» тенине сăмахăн-сăмахăн чăвашла куçарнă тесе.

Вырăсла шухăшласа çырнăшăн айăпласран хаçат ĕçтешĕсен «*Пĕлӳ кунĕ ячĕпе “5” паллăсем кăна сунатпăр!*» йышши предложенисемпе çине-çине усă курмаллачĕ те: «*Пĕлӳ кунĕ ячĕпе саламлатпăр! “5” паллăсем кăна сунатпăр!*» — тени çитетчĕ.

Пире «*Ĕçе — халăх йăлисемпе килĕшӳллĕ илемлĕ çи-пуçпа*» предложени те («Хыпар», 2025.11.26) килĕшмест. Ăна вырăссем: «*На работу — в красивой одежде в соответствии с обычаями народа*», — тенине кура тунă. Кунсăр пуçне «*халăх йăлипе*» темелле: пĕрреллĕ хисеп кирлĕ. Тĕрĕс тусан предложени акă

епле илтĕнмелле пек: «*Ĕçе халăх йăлипе килĕшӳллĕ илемлĕ çи-пуçпа пырăпăр*». Вырăссен «*в соответствии с обычаями народа*» сăмахĕсем предложенин ытти сăмахĕсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннине пăхсан чăвашла вариантра «*халăх йăлипе килĕшӳллĕ*» сăмахсене чарăну паллисемпе уйрăмлатас пулать. Уйрăмлатманни «*халăх йăлипе килĕшӳллĕ илемлĕ çи-пуç*» тенине пĕлтерет.

Сăмах май, «Хыпар» хаçата кура пулас, Чăваш радиовĕ: «*Температура 5 градус сивĕ пулать. Юр çумасть. Çулсем пăрлак*», — тесе киленет. Кунта «*Çулсем пăрлакланаççĕ*» предложени кирлĕ.

Грамматикăна пĕлменнипе тăвакан йăнăшсенчен вырăссен ***в*** предлогĕ тата паллă ячĕ тăвакан *-ский (-ская, -ское)* тата ытти суффикссем вырăнне хаçат-журналта, вăл шутра «Хыпарта» та, *-ри (-ти, -чи)* аффикспа тăтăш усă курнине каламалла. Йăнăш ытла кăнттам пулнине уйрăмах географи объекчĕсен ячĕсенче курма пулать.

Халь *Хусан университечĕ*, *Чĕмпĕр чăваш шкулĕ*, *Канаш педагогика училищи* теме пăрахрĕç. Вĕсем *Хусанти университет*, *Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ*, *Канашри педагогика училищи* пулса тăчĕç. Ку йышши йăнăшăн сăлтавĕсем хаçат ĕçтешĕсен чĕлхе туйăмĕпе кăна çыхăнман. Йăнăш хăй тымарне вун-вун çул ĕлĕкрех янă темелле. Акă статьясемпе кĕнекисене вырăссене пăхса «Деепричастие в чувашском языке», «Обособление в чувашском языке», «Конструкции с прямой и косвенной речью и несобственно-прямая речь в современном чувашском литературном языке» тесе ят параттăмăр та чăвашла çырма тăрсан *чăваш чĕлхин**чи*** тени вырăнсăр иккенне асăрхамастăмăр. Совет саманинче ялта ушкăн ĕçне ертсе пыракан çын *колхоз председател**ĕ**ччĕ*, колхозниксем вара *колхоз**ри**ччĕ*: *«Ĕç паттăрĕ» колхоз председател**ĕ***, анчах *«Ĕç паттăрĕ» колхоз**ри** механизатор*. Ку йĕркен вăйĕ паян кун тепĕр хут чĕрĕлчĕ курăнать. Пире тимлĕ пулма хистекен чи пĕлтерĕшлĕ сăлтав вăл — пирĕн чĕлхен камăнлăх форми пурри. Камăнлăх форми вырăсла чаплă калаçма вĕреннĕ çынна чăрмав кăна кӳрет пулас. Эппин, информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсен хăйсен чăвашла пуплевне ятарласа аталантармалла. Куçарусăн икĕ чĕлхене те лайăх пĕлме тивĕç пурри çинчен Раççей Президенчĕ В. В. Путин «Çын тăвакан интеллект тĕнчинче иртекен çул çӳрев» конференцире (2025.11.19–21) ахальтен каламарĕ.

«Хыпарта», ытти хаçат-журналта тата радиопа телевиденире ку е вăл учрежденин адресне кăтартма тесе усă куракан ***-ти*** аффикс вăл çын миçе çула çитнине кăтартнă чухнехи аффикс майлă, анчах ăна туллин саплаштараймасть. Çын мĕн чухлĕ пурăннине пĕлтерме кирлĕ ***-ти*** аффиксăн улшăнса тăнине палăртакан пĕлтерĕшĕ пур. Акă *вун саккăрти хĕр* тени хĕр ӳсĕмпе вун çиччĕпе вун тăххăр хушшинче пулнине пĕлтерет. Вун саккăр тултарсан хĕр вун тăххăра куçать те пĕр çул хушши вун тăххăрта пурăнать. Çавнашкал майпа вăхăт пĕр тапхăртан тепĕр тапхăр улшăнса малалла шăвать. Çак улшăнупа куçу пĕлтерĕшĕ ***-ти*** аффикса яланхи вырăн пĕлтерĕшĕпе усă курасран асăрхаттарать, мĕншĕн тесен эпир шухăшлакан объект хăй вырăнне улăштармасть. Акă «*Йĕпреç округĕн**чи** Чăваш Тимеш ялĕнче пурăнакан Лариса Анисимова “Раççейĕн ылтăн пылĕ” конкурса хутшăннă*» («Хыпар», 2025.11.25) предложенире *Йĕпреç округĕнчи* тени вырăнсăр, мĕншĕн тесен Чăваш Тимеш ялĕ пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçса çӳремест, хăй вырăнне улăштармасть. Куçу округ чикки улшăнсан кăна пулма пултарать[1].

***-Ти (-ри, -чи)*** аффикспа пĕлсе усă курмасан шухăш енчен пăтравлăх та сиксе тухать. Тĕслĕхрен, 2025 çулхи чӳк уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухнă номерте (16-мĕш стр.)

[1] Виноградов Ю. М. Эсир ăçтан, миçере? // Халăх шкулĕ = Народная школа. 2025. № 5. С. 64.

«*Çак кунсенче К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕн сцени çин***че** *Чăваш, Калмăк, Алтай, Мари, Саха республикисен***чи***, Пермь крайĕн***чи** *артистсем хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç*» предложени пур. Вулатăн та, пирĕн республика тулашĕнчен килнĕ артистсем пĕр вăхăтрах хăйсен тăван çĕрĕнче те, Чăвашра та пулнă пек пулса тухать. Танлаштарăр: *Çак кунсенче К. В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕн сцени çинче Чăваш, Калмăк, Алтай, Мари, Саха республики***сен***, Пермь край***ĕн** *артисч***ĕ***сем хăйсен ăсталăхне кăтартрĕç*.

Тепĕр йышши грамматика йăнăшĕ вăл, пирĕн шухăшпа, вырăссен **сыхăну мелĕсене евĕрлесе** *пăшалтан пер, ĕçе пурнăçла, инструкцие пурнăçла, тăмра çинче выля* майлă йăнăшсем туни. Ку тĕслĕхсенче сăмахсен пĕлтерĕшне пăтраштарнине те куратпăр. Тĕрĕс вариантсем çаксем: *пăшалпа пер, ĕç ту, инструкцие пăхăн, инструкципе (инструкцие пăхăнса) ĕçле, тăмра кала*.

Пичетре тăвакан грамматика йăнăшĕ шкул ачисене тĕрĕс çырма вĕрентме чăрмантарать.

**Лексика** енĕпе тăвакан пысăк йăнăш, пирĕн шухăшпа, *йĕркеле* сăмахпа вырăссен «организовать» глаголĕн пĕлтерĕшĕпе усă курни. *Йĕркеле* вăл «йĕрке тыт, ертсе пыр» пĕлтерĕшлĕ. «Организовать» тенин пĕлтерĕшне туллинрех *хатĕрлесе иртter* сăмах майлашăвĕ уçса парать. Унпа усă курни шанчăклăрах. «Паттăрсене чыслатпăр» информацире («Хыпар», 2025.12.05) *Шупашкарта йĕркеленĕ стрелоксен 324-мĕш дивизийĕ* сăмах майлашăвĕ тĕл пулать. Кунта «организовать» глагола *никĕсле* глаголпа куçарма май пуррине куратпăр, кунашкал контекстра *ту* глагол та вырăнлă пулмалла.

Чылай вăхăт маларах манăçа юлнă йăнăшсем каллех чĕрĕлни лайăх мар. Акă 2025 çул вĕçĕнче *ту* глагол вырăнне каллех *пурнăçла* глаголпа усă курма тытăнчĕç. Сăмахран, раштавăн 5-мĕшĕнче тухнă номерте статья ятĕнчех йăнăш янă: *«Юсав ĕçĕсене вăраха ямасăр пурнăçлĕç»* (2-мĕш стр.). Мĕне пурнăçлаççĕ? Шухăшра палăртса хунине: ĕмĕте, тĕллеве, плана, программăна т. ыт. те. Ĕçе вара тăваççĕ. Çавăнпа та *пурнăçлĕç* тес вырăнне *тăвĕç* темеллеччĕ. Асăннă номерăн 11-мĕш страницинче «Ахаль пурăнман, çынсемшĕн тăрăшнă» материалта курсивпа пичетленĕ *Яваплăх пысăкчĕ, ĕç нумаййчĕ, Правительствăн кашни йышăнăвĕпе хушăвне алă пусмаллаччĕ, вĕсене епле пурнăçланине те хамăнах тĕрĕслемеллеччĕ* текст пур. Йышăнăва пурнăçлаççĕ пуль. Хушăва тумалла пек. Çавăн пекех, «Паттăрсене чыслатпăр» материалта «*Пирĕн çар…* (эпир кĕскетрĕмĕр. — *Ю. В.*) *Мускав хӳтĕленӳ операцине пурнăçланă*» тени пур. «Хыпар» çыннисем «*Мускав хӳтĕленӳ операцине хутшăннă*» тесшĕн пулнă пулас.

«Хыпарăн» **орфографипе** ĕçлемелли те сахал мар паллах. Тĕслĕхрен, хаçат правилăсене вăя кĕртнĕренпе (1994) 30 çул ытла иртсен те *хĕр ача*, *ар çын* (уйрăм), *çĕр-шыв* (дефиспа) çырма паян кун та хăрать. Уйрăмах кун ячĕсем шиклентереççĕ. Вĕсем пирки, тĕрĕссипе, пĕр-пĕр комисси йышăну туса хушу парасса кĕтмелле мар, мĕншĕн тесен кун ячĕсене «Хыпар» никĕслевçи Н. В. Никольский профессор пĕрремĕш номертех уйрăм çырнă[2]. Куна «Чăваш энциклопедийĕн» Н. В. Никольские халалланă статйинче панă ӳкерчĕкех ĕнентерет[3].

Халь пăхса тухнă ыйтусенчен ***-ри*** аффикссăр пуçне ыттисем пирки мĕн шухăшланине эпир хаçат редакцине çырусем ярса пĕлтерсе тăратпăр. «Хыпар» çырусене, тĕпрен илсен, вуланипе çырлахать, шута илнĕ сĕнӳсем те пур. Çавăнпа паян

---

[2] Виноградов Ю. М. Кун ячĕсемпе усă курасси // Тăван Атăл. 1991. № 1. С. 70 — 71.
[3] Чувашская энциклопедия: в 4 т. Т. 3: М — Се. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. С. 242.

кун «Хыпарта» ĕçлекенсем хăйсене чылай ирĕк тытма тивĕç, мĕншĕн тесен кашниех шухăшлама, фактсене танлаштарма, шкул ачисене пулăшма тивĕç пуррине ăнланать.

«Хыпарти» грамматикăпа та, лексикăпа та, орфографипе те çыхăнман йăнăшсенчен тата **текст** тăвассипе пулаканнисене асăнса хăвармалла. Ытларах — сыпăнчăклă текст пулса çитейменни. Чăннипех сыпăнчăклă текстра умлă-хыçлă предложенисенчен иккĕмĕшĕн тема ушкăнĕ пĕрремĕшĕн реми çине таянать: *Йывăçăн пысăк вуллисем патне* Т / Р ***тĕкĕсем*** *вырнаçтарăр*. ***Вĕсене*** Т / Р *«Т» сас палли евĕр лартма юрать* («Кил-çурт, хушма хуçалăх», 2025.11.27). Ку тĕслĕхре малтанхи предложенин *тĕкĕсем* сăмахĕ вырăнне *вĕсене* сăпат местоименине каланă. Вăл тема тытăмĕнче тăрать. Текст çакăн пек сыпăнса пырать. Ку йĕрке, шел те, йăнăш калаçу витĕмĕпе пăсăлма пултарать: *Хурт çăкăрĕпе* Т / Р *пыл хурчĕсем* ***тин çуралнисене*** *тăрантараççĕ. Виçĕ кун хушшинче* Т / Р ***вĕсем*** *1500 хут пысăкланаççĕ* («Кил-çурт, хушма хуçалăх», 2025.11.27). Ку тĕслĕхре вĕсем местоимени рема тытăмĕнче пулнине куратпăр. Тĕрĕс тунă текст ак çакнашкал пулма тивĕç: *Хурт çăкăрĕпе* Т / Р *пыл хурчĕсем* ***тин çуралнисене*** *тăрантараççĕ*. ***Вĕсем*** Т / Р *виçĕ кун хушшинче 1500 хут пысăкланаççĕ*. Хăш чух пĕр ăнлава юнашар предложенисен темисем пĕлтереççĕ: ***Пурăнакан çынна****, тĕлĕкре, вилнĕ пек курни* Т / Р *— лайăх паллă*. ***Ăна*** Т / Р *вăрăм та телейлĕ пурнăç кĕтет* («Кил-çурт, хушма хуçалăх», 2025.11.27). Танл.: *Лайăх паллă тесе* Т / Р *—* ***пурăнакан çынна*** *тĕлĕкре вилнĕ пек курнине шутламалла*. ***Ăна*** Т / Р *вăрăм та телейлĕ пурнăç кĕтет*. Йăнăш ремăсенче пĕрешкеллĕх сиксе тухнипе те пулать: *Алăра* Т / Р *—* ***кĕлĕ кĕнеки***. *Çул тăршшĕпе* Т / Р ***ăна*** *вуласа пыратăп* («Хыпар»). Танл.: *Алăра* Т / Р *—* ***кĕлĕ кĕнеки***. ***Ăна вуласа*** Т / Р *çул тăршшĕпе пыратăп*.

«Хыпарпа» унăн ушкăнĕнчи хаçатсенче тата ытти йышши кăлтăксем те пур. Вĕсене ятарласа тишкермелле, редакцисем патне çитермелле. Редакцисен ĕçтешĕсем хальхи ăслăлăх кăларăмĕсенче, шкулăн вĕренӳ кĕнекисенче мĕн çырнине хăйсем тĕллĕн ăса хывни те усăллă пулĕ.

**Пĕтĕмлетӳ**

Çапла вара, йăнăшсем чĕрĕ пуплевре те, çырура та асăрхама пулать. Вĕсене тӳрлетме май пур, чĕлхен тытăмне вара улăштарма çук. Чĕлхе тытăмĕ мĕнле иккенне, мĕнлерех пулассине плебесцит ирттерсе те татса параймăн. Чĕлхе тытăмĕ мĕнле пуласси алă тăратса сасăланинчен е власть органĕсем йышăннинчен те килмест. Сасăлав е власть органĕсен йышăнăвĕ чĕлхепе ăçта, хăçан тата епле усă курассине кăна кăтартма пултарать.

Чĕлхе тытăмне ăнланас тесе ăсчахсен темиçе ăрăвĕ чылайранпа ятарласа тĕпчесе пухнă пĕлӳ ятарлă тĕпчев ĕçĕсенче тата шкулăн вĕренӳ кĕнекисенче кун курса пырать. Пуплев нормине ăнланма пулăшакан пичет литературинчен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн кăларăмĕсене [1; 2; 3; 4] тата Вĕренӳ министерстви чăваш шкулĕсем валли Пĕтĕм Раççей вĕренӳ концепцине тивĕçтерсе хатĕрленĕ чăваш чĕлхи кĕнекисене[4] кăтартмалла.

---

[4] Виноградов Ю. М., Петрова Л. Г. Чăваш чĕлхи. 7-мĕш класс: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 224 с.; Виноградов Ю. М., Егорова А. С. Чăваш чĕлхи. 8-мĕш класс: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 224 с.; Виноградов Ю. М., Егорова А. С., Петрова Л. Г. Чăваш чĕлхи. 9-мĕш класс: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 224 с.; Виноградов Ю. М. Чăваш чĕлхи. 10–11-мĕш классем: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 272 с.; Петрова Л. Г., Виноградов Ю. М. Чăваш чĕлхи. 6-мĕш класс: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 224 с.; Сергеев Л. П., Андреева Е. А., Брусова Г. Ф. Чăваш чĕлхи. 5-мĕш класс: вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 240 с.

Пуплевпе ҫыру — чӗлхен пурнӑҫри палӑрӑмӗсем. Хаҫатри пуплевпе ҫыру йӗрки чӗлхен тытӑмӗпе туллин килӗшсе тӑмалла. «Хыпарта» та, ытти информаци хатӗрӗсенче те ку статьяра пӑхса тухнӑ йӑнӑшсем кӑна мар, урӑх йышшисем те тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсене пӗтерес тесен пирӗн тӑван чӗлхемӗрӗн тытӑмне лайӑх пӗлес пулать.

ҪӐЛКУҪСЕН СПИСОКӖ / СПИСОК ИСТОЧНИКОВ

1. Долгова А. П. Синтаксис чувашского языка: Словосочетание, Простое предложение: монография / науч. ред. Э. Е. Лебедев. Чебоксары: ЧГИГН, 2924. 236 с. (Строй чувашского языка).
2. Лебедев Э. Е. Словообразование в чувашском языке: монография / науч. ред. О. Р. Студенцов. Чебоксары: ЧГИГН, 2023. 212 с. (Строй чувашского языка).
3. Сергеев В. И. Морфология чувашского языка: словоизменение, формоизменение и формообразование: монография / науч. ред. А. П. Долгова. Чебоксары: ЧГИГН, 2017. 400 с. (Строй чувашского языка).
4. Яковлев П. Я. Фонетика и фонология чувашского языка: монография / науч. ред. А. П. Долгова. Чебоксары: ЧГИГН, 2020. 288 с. (Строй чувашского языка).

REFERENCES

1. Dolgova A. P. The syntax of the Chuvash language: Word combination. Simple sentence: monograph / edited by E. Y. Lebedev. Cheboksary;2024:236. (In Russ.)
2. Lebedev E. Y. Word formation in the Chuvash language: monograph / edited by O. R. Studentsov. Cheboksary;2023:212. (In Russ.)
3. Sergeyev V. I. Morphology of the Chuvash language: inflection, form change and form formation: monograph / edited by A. P. Dolgova. Cheboksary;2017:400. (In Russ.)
4. Yakovlev P. Ya. Phonetics and phonology of the Chuvash language : monograph / edited by A. P. Dolgova. Cheboksary;2020:288. (In Russ.)

Статья редакцие 12.01.2026 ҫитнӗ;
рецензиленӗ хыҫҫӑн 16.02.2026 ырланӑ; 02.03.2026 пичете йышӑннӑ
*Автор ҫинчен*:
**Виноградов Юрий Михайлович**, Чӑваш Республикин вӗренӳ
институчӗн Регион аталанӑвӗн центрӗн ертсе пыракан ӑслӑлӑх ӗҫченӗ
(428001, Раҫҫей, Шупашкар хули, М. Горький пр., 5),
филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ,
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902, jurijvin46@mail.ru
*Пайталӑх конфликчӗ: автор пайталӑх конфликчӗ ҫуккине пӗлтерет.*
*Автор ал ҫырӑвӑн юлашки вариантне вуласа тухнӑ, ырланӑ.*

Статья поступила в редакцию 12.01.2026;
одобрена после рецензирования 16.02.2026; принята к публикации 02.03.2026
*Информация об авторе*:
**Виноградов Юрий Михайлович**, ведущий научный сотрудник
Центра регионального развития
Чувашского республиканского института образования
(428001, Россия, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5),
кандидат филологических наук,
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902, jurijvin46@mail.ru
*Конфликт интересов: автор заявляет об отсутствии конфликта интересов.*
*Автор прочитал и одобрил окончательный вариант рукописи.*

The article was received by the editors on 12.01.2026;
approved after reviewing 16.02.2026; accepted for publication 02.03.2026
*Information about the author*:
**Yuriy M. Vinogradov**, leading researcher
of the Center for Regional Development
of the Chuvash Republican Institute of Education
(5, M. Gorky Ave., Cheboksary, 428001, Russia);
Candidate of Philology Sciences,
ORCID: https://orcid.org/0000-0003-1564-8902, jurijvin46@mail.ru
*Conflict of interests: the author declares that there is no conflict of interests.*
*The author has read and approved the final version of the manuscript.*